Инв. №



А. КĂЛГАН

# АЛИМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1941

Обязательный
контрольный
экземпляр

АЛЕКСАНДР КĂЛГАН

ОБЯЗАТЕЛЬНЫ
экземпляры в количестве
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
4 IX 1941 г.
Подпись
рег. № 172

# АЛИМ

*3 АКТЛĂ*
*ПЬЕСА*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

## ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Алим,** 13 çулта.
**Сарпи,** 14 çулта.
**Леврен,** Сарпи аслашшĕ, кĕтӳç.
**Сартуан,** 14 çулта.
**Илюш**, **Миша** — Сартуан юлташĕсем.
**Иван,** красноармеец.
**Çемен,** 23 çулта, Хантар Павăлĕн тарçи (уксах).
**Хантар Павăлĕ,** çĕрме пуян.
**Мараç,** унăн арăмĕ.
**Настя,** вĕсен кинĕ.
**Куштан Якку,** ялти писарь.
**Поляков,** шурă офицер.
**Сашков,** шурă салтак (офицер денщикĕ).
**1-мĕш шурă салтак,** мăнтăркка этем.
**2-мĕш шурă салтак,** хытканскер.

## ПРОЛОГ

Ял. Хурал пӳрт умӗ. Пӳртӗн икӗ енӗ курӑнать: пӗр енче—решоткӑллӑ чӳрече, тепӗр енче—алӑк. Декораци—ял, йывӑççем... Сулахайра пус пури. Пура çинче кантӑраллӑ витре. Пус пуринчен инçех мар пысӑк чул выртать. Каç кӳлӗм.

Аякра тупӑ сассисем.. Алим чул çинче типнӗ çӑкӑр кышласа ларать. Çумне хутаç çакнӑ.

Алим (*çие çие*). Ай, вай-вай, епле панлаттараççӗ! Хӑшӗсем вӑйлӑрах переççӗ-ши: хӗрлисем-ши, шуррисем-ши? Ман атте ялан „хӗрлисем пурпӗрех çӗнтереççӗ", тетчӗ. „Ун чух вара лайӑх пурӑнӑç пуçланӗ пирӗншӗн", тетчӗ. Часрах çӗнтерӗçинччӗ хӗрлисем... (*Çӑкӑрне çисе пӗтерчӗ те хутаççине çыхса хучӗ*). Ну, хырӑма тӑрантартӑм. Тутлӑ апат хыççӑн чей ӗçсе ярас пуль. (*Тӑрса пусӑран шыв ӑсать те витрине тайӑлтарса ӗçет*). А-ӑв, пӗçерет... (*Татах ӗçет.*) Их, тутлӑ та! Ну, халь ӗнтӗ выртса улпут хырӑмӗ тӑвасси кӑна юлчӗ. (*Хурал пӳрчӗ патнелле утса*). Ман валли пушӑ çурт та янтӑ акӑ. Кӗрсе выртас та, çывӑрас пӗравкана. Унтан çӗрле

малалла шуçтарăп. Эх, часрах çитесчĕ! Вара тӳрех комиссар патне пыраттăм та: „Комиссар юлташ, эп—Алим! –тейĕттĕм.—Ман аттене шуррисем персе вĕлерчĕç. Илĕр мана шуррисемпе çапăçма!..“ (*Хурал пӳртне кĕрсе каять те тимĕр решотка витĕр пăхать*). Вăт хайхи Алим тĕрмене те çакланчĕ. (*Аллисене решотка витĕр тăсать. Шӳт туса*). Хăтарăр мана, юлташсем! Хăтарăр! Эп вăрламан та, çын та вĕлермен. Эп ыйткаласа анчах çӳретĕп! (*Хăйĕнчен-хăй ахăлтатса кулать. Унтан чӳрече умĕнчен çухалать*).

Кăшт тăрсан икĕ шурă салтак арестленĕ Ивана илсе кĕреççĕ. Иванăн аллисене хыçалалла туса çыхнă.

1-мĕш салтак (*Ивана*). Стой, большевик!

Иван (*чарăнчĕ те, çавăрăнса пăхрĕ*).

2-мĕш салтак (*теприне*). Ма чартăн?

1-мĕш салтак. Пĕртак канар-ха.

2-мĕш салтак. Мĕн канмалли! Часрах штаба çитес пулать.

1-мĕш салтак. Ĕлкĕрĕн. Штаб ниçта та тармĕ-ха пирĕнтен.

2-мĕш салтак (*Иван çине пăхса*). Штаб тармĕ те, акку... Каç пулать вĕт...

1-мĕш салтак. Ничево. Давай-ха, çав хурал пӳртне хупар ăна. Эс сыхлама юлăн, эп кайса, çимелли тупса килем.

2-мĕш салтак. Ялан хырăм шухăшĕ анчах сан. Часрах эппин...

1-мĕш салтак (*Ивана*). Эй, ристан! (*Иван çавăрăнса пăхать*). Ут, кĕр çав хурал пӳртне.

Иван. Мĕн асапланса çӳретĕр мана пула? Е персе пăрахăр, е ирĕке ярăр та—нуши те пĕтет.

2-мĕш салтак. Ну, Ну! Шăпрах пул. (*Хурал пӳрт алăкне уçса пăхать, анчах Алима курмасть. Ивана*). Часрах çаврăнкала! (*Тĕксе кĕртсе ярать. Алăкне хупса çаклатса хурать*).

1-мĕш салтак. Ну, вот. Халь çĕр каçма та пултаратпăр кунта.

2-мĕш салтак. Ухмах пуль эсĕ. Служба çинчен нимĕн те шутлама пĕлместĕн.

1-мĕш салтак. Маншăн пулсан—кун ирттĕр те, çĕр ирттĕр. Служби мĕнĕ çавăнта. Пире пурпĕр награда парас çук.

2-мĕш салтак. Ав çав йывăçран çакса хурас пулать сана, кун пек калаçнăшăн.

1-мĕш салтак. Турат чăтас çук вĕт мана?

2-мĕш салтак. Е, çитĕ! Кайса тупса кил часрах мĕн те пулин. Сана итлесе хамăн та хырăм çурăма хырма пуçларĕ.

1-мĕш салтак. Эхе, çапла-им? Хырăм тени пурин те пĕрех çав вăл. Ну, кайрăм. Вон, çав шатруна тĕллем-ха, мĕн те пулин çакланатех унта. (*Тухса каять*).

Алим (*салтак кайнине вăрттăн чӳречерен пăхса юлать*). Кайрĕ...

2-мĕш салтак (*алăк умне ларать*). Сволочсем... Хам пуçлăх пулсан, вĕрентĕттĕм эп сире...

Алим (*хытă кăшкăрса*). Ай, кам ку? (*Салтак чăр-чар пăхкалать, ура çине сиксе тăчĕ*).

Салтак. Мĕнле ача сасси ку? (*Йĕри-таврā пăхкалать.*)

Алим (*алăка шаккаса*). Краул! Хăтарăр!..

Иван. Ан хăра... Тивместĕп вĕт эп сана.

Алим (*алăка шаккаса*). Кам унта? Уçăр алăка! Уçăр!..

Салтак. Кам кăшкăрать унта?

Алим. Эпĕ...

Салтак. Кам эсĕ?

Иван. Ыйткалакан ача пулнă кунта. Уçса кăларăр ăна.

Салтак. Суятăн эсĕ! Санран пуçне урăх никам та çук унта.

Алим. Пур, пур! Эпĕ пур... Ай, хăратăп!.. (*Алăка шаккать*). Уçăр, уçăр алăка!

Иван. Илтместĕн-им ара, ача сассине? Шанмасан, чӳречерен пăх эппин. Эй, ача, чӳрече патне пыр, куртăр çав. (*Алим чӳречерен пăхса кăшкăрать.*)

Салтак (*чӳрече енне çавăрăнать те Алима курать*). Ăçтан çакланнă эс кунта?

А л и м. Эп çывăрма кĕрсе выртнăччĕ. Кăлар мана, салтак пичче, хăратăп эп вăл ристанран.

И в а н. А-а, эс мана ристан тетни-ха!

А л и м. Ай, вай-вай! Краул! (*Алăка шаккать*). Салтак пичче, салтак пичче! Кăлар мана! Кăлар часрах!

С а л т а к (*алăк патне пырать*). Вот путсĕр ача! Çухăрать те çухăрать! Кăларасим ара... (*Алăка уçать*). Тух!.. (*Алăк уçăлнă-уçăлманах Иван салтак çине сиксе ларса, ăна пуçран кирпĕчĕпе çапса ӳкерет, унтан татах çапать*). Алим та пӳртрен сиксе тухать).

А л и м. Иван пичче, тарар часрах!

И в а н. Айта! (*Алима алăран çавăтать те, хăвăрт чупса тухса каяççĕ. Салтак ним хускалмасăр выртса юлать*).

Ч А Р Ш А В.

## ПĔРРЕМĔШ АКТ

Шыв хĕрри. Сулахайра тапăр. Унта халь анчах кăнтăрлана кĕтӳ антарнă: ĕнесем, путек-сурăхсем макăркалани илтĕнет. Тӳрех, йывăç тĕмĕсем урлă ял курăнать. Сылтăмалла вăрман пуçланать.

Уйрăмрах ӳссе ларакан йывăç айĕнче Леврен мучи кунтă авса ларать. Ун çумĕнче пĕр çыхă вĕтĕ хăва выртатъ.

Вăрманта кайăксем юрлани тата куккук авăтни илтĕнет.

Леврен (*пуçне çĕклесе сулахаялла пăхрĕ*). Ах, усал! (*Кунтине айккинелле хурса ура çине тăчĕ*). Хас! Ăçта каятăн унта! Эй, ачасем! Çав ĕнене хăратса ярăр-ха кунталла! (*Кăшт утса кайрĕ те чарăнчĕ.*) Вăт ăнман выльăх, кĕтӳрен тарма анчах пăхса тăрать. Выртасчĕ тĕк кăна, тапăра антарнă чух... Ну, вăт, маттур ачасем. (*Пăхса тăчĕ-тăчĕ те татах хăй вырăнне ларса кунтă авма пуçларĕ*). Пулать иккен тĕнчере: хуçи епле —выльăхĕ те çаплах. Чупкăн-и чупкăн. Яккăвĕ ял тăрăх, ĕни хир тăрăх. (*Пăртак шăп ларнă хыççăн малтан ĕнерлесе çеç, унтан сăмах каласа юрлама пуçлать*).

Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать,
Хырăмĕ пит выçнăран
Силпи ялнелле пăхать.

(*Вăрманта шăхлич калани илтĕнет.*) Турран килтĕрех, хăлхам суять пулсан. Чăнах та шăхлич сасси мар-и çак? (*Кăн итлесе тăрать*). Ай-яй, шеп те калать, мур!

Сулахайран ачасем шавласа кĕреççĕ. Сартуан витре йăтнă, Илюшпа Миша вăлта хуллисем тытнă.

Сартуан (*хытă шавласа*). Пурпĕр хăрамастпăр вĕсенчен! Ыран татах килетпĕр!..

Леврен. Итлĕр ха, ачасем, епле шăхлич калаççĕ вăрманта! (*Ачасем шăпланса итлеме пуçлаççĕ, анчах шăхлич сасси чарăннă*).

Илюш. Уй, тыттарать те Леврен мучи!

Сартуан. Нимле шăхлич сасси те çук.

Миша. Кайăксем чĕвĕлтетеççĕ...

Леврен. Халь эс ара! Чăнах шăпланнăçке? Ай-яй лайăх та вылярĕ çав! Шăпчăк пекех шăхăрттарать. Епле илтеймерĕр-ха эсир?

Сартуан. Хытă шавласа килтĕмĕр эпир. Пире Хантар Павăлĕпе Куштан Якку пулă тытнă çĕртен хăваласа ячĕç.

Миша. Хăйсем анчах тытасшăн...

Илюш. Лĕпĕртетсе ан çӳрĕр, теççĕ.

Леврен. Пилсĕр çынсем вĕсем, усал çынсем.

Сартуан. „Ман ҫӗр ҫинчи кӳлӗрен пулӑ ан тытнӑ пултӑр!“—тет Хантарӗ.

Илюш. Яккӑвӗ мана хӑлхаран туртрӗ.

Миша. Хӑйсем сӗрекепе тытаҫҫӗ, пире вӑлтапа та тыттарасшӑн мар.

Сартуан. Вӗсем пыман пулсан, ҫак витрене чӑпах тултараттӑмӑр, лайӑх хыпма пуҫланӑччӗ.

Леврен (*Сартуан аллинчи витрене пӑхса*). И-ий, эсир кӳлле пӗр пулӑ та хӑварман пуль? Нумай тытнӑ, нумай. Епле Павӑл тӑпӑлтарса юлмарӗ-ха?

Сартуан. Эпир витрене хӑмӑш хушшине пытарнӑччӗ.

Леврен. Маттур, маттур. Чеерех пулӑр ҫав. Ун пек ҫынсем янтине туртса илме ҫеҫ пӑхаҫҫӗ вӗт.

Сартуан. Хӗрлисем килсен, кӑтартӗҫ-ха вӗсене.

Леврен. Юрӗ, юрӗ, Сартуан. Ун ҫинчен ан шарла-ха. Шӑпӑрт кӑна кӗтсе тӑрар-ха. Мӗн пулассине кайран курӑпӑр.

Сартуан (*сӑмаха пӑрса*). Шӑрпӑк пур-и сан, Леврен мучи?

Леврен. Ҫук ҫав, ачам. Вут чӗртес тесен, ҫулу пур ман.

Миша. А тӑвар пур-и?

Леврен. Эх, ачасем, тӑвар курманни нумай пулать ӗнтӗ.

Илюш. Пирĕн кăшт пур та, анне арчана питĕрсе хурать.

Леврен. Мĕне кирлĕ-ха сире тăварпа шăрпăк?

Сартуан. Пулă пĕçерме.

Миша. Ëхĕ, пулă пĕçерме çав.

Илюш. Ман çăкăр та пур.

Леврен. Чупăр эппин, хăрăк пухса тухăр вăрмантан. (*Тăрса йывăç турачĕ çинчен пĕчĕк витрене илет*). Эпĕ шыв ăсса килем. Ман пĕр çĕрте тĕлĕнмелле çăл пур. Унăн шывĕ тăвар ямасăрах тăварлă.

Ачасем. Эпир те пыратпăр, Леврен мучи.

Леврен. А кĕтеве кам сыхлĕ вара?

Сартуан. Эс юл, Миша. Эс çарран: вăрманта урусене чĕркелесе пĕтерĕн.

Миша. Юрĕ эппин, юлам. Эп леш хĕррине ларатăп. (*Леврен мучин пушшине илчĕ те шартлаттарса сулахаялла тухса кайрĕ. Ыттисем пурте вăрманалла кĕрсе çухалчĕç*).

Кăшт тăрсан ял енчен апат йăтса Сарпи тухрĕ.

Сарпи (*йĕри-тавра пăхкалать*). Ăçта кайнă ман асатте? Кĕтсе ывăнчĕ пуль вăл мана. Хырăмĕ пит выçрĕ пуль. (*Пăлханса.*) Ниçта та курăнмасть. (*Апачĕсене йывăç айне лартрĕ те, хĕрринелле чупса кайрĕ. Аяккалла пăхса кăшкăрать*). Асатте! (*Итлесе тăрать. Вăрманта татах шăхлич сасси илтĕнет*). Кам шăхлич калать? Асатте мар-

ши? Çăка хуппине ӳкерсе шăхлич тунă пулĕ-те... Ай, мĕнле хитре калать! Çук, асатте мар пуль вăл. (*Кăшкăрать*). Асатте!.. Ки-ил!.. Апат илсе килтĕм!.. Асатте-е!.. (*Итлесе тăрать. Шăхлич сасси чарăнать*). Асаттех иккен. Илтрĕ ман сасса: шăхлич калама чарăнчĕ. Пытанам-ха юриех. (*Тĕм хыçне пытанса*). Куккук!.. (*Шăпланчĕ*).

Вăрмантан Алимпа Иван пуçĕсене кăларса пăхаççĕ. Никам та çуккине кура, тухаççĕ. Иван хресчен тумĕпе, сухаллă. Алим малтанхи пекех, çĕтĕкрех пиншакпа, хура шĕлепкепе.

Иван (*аллипе ял еннелле кăтартса*). Ав, Наратлăх ялĕ курăнать.

Алим. Куратăп, Иван пичче.

Иван. Аслă çул çав ял витĕрех тухса каять.

Алим. Пĕлетĕп. Пулнă эп вăл ялта.

Иван. Шуррисем çав çул тăрăх Уфаналла чакаççĕ. Ман вĕсем панчен иртсе хамăрăннисем патне çитес пулать. Часрах Чапаева пĕлтермелли хыпарсем пур... Пирĕн уйăрлас пулать, Алим.

Алим. Ăнланатăп, Иван пичче.

Иван. Эп сана пысăк ĕç хушса хăварасшăн, Алим. Эс нимрен те хăраса тăрас çук вĕт?

Алим. Эп Хамидулла ачи. Ман атте хăравçă пулман.

Иван. Тĕрĕс, Алим. (*Алима пакет парать*). Акă, тыт çак пакета, шаларах пытар.

Шуррисем Наратлăха çитсенех, хăть хăш вăхăтра пулсан та, часрах Саркассине çитсе Сахрун пичче арăмне пар. Шуррисене Ик кĕперĕ урлă касса кайма ирĕк парас пулмасть.

Алим. Юрать, Иван пичче. Хăть чул çусан та, кайса паратăп. (*Пакетне шалти кĕсъине пытарать. Çав вăхăтра Сарпи тĕм хыçĕнчен пуçне çĕклесе пăхать те татах пытанать*).

Иван. Шуррисем нумаях тытăнса тăрас çук. Вĕсем кунта çитиччен эсĕ Наратлăхрах пурăн.

Алим. Юрать. Ав, кĕтӳ кунта: кĕтӳçсемпе пĕрлешетĕп те...

Иван. Анчах асту, пĕлсе калаç вĕсемпе...

Алим. Хăть кам ыйтсан та: „тăлăх ача" эпĕ, „ыйткаласа çӳретĕп".

Иван. Тĕрĕс, Алим. Ну, ман васкас пулать. Ака сана, асăнмаллăх пэкĕ парса хăварам. (*Алима пэкĕ парать*).

Алим. Ай, вай вай мĕнле шеп пэкĕ! Ну, рэхмэт, Иван пичче.

Иван. Ан çухат, вăл пэкĕпе Чапаев çăкăр касса çинĕ.

Алим (*пэккине савăнса пăхкалать*). Чапай!..

Иван. Ну, сывă пул, Алим. Чĕрĕ юлсан— часах тĕл пулăпăр. Вара иксĕмĕр пĕрле хулана вĕренме кайăпăр. Эс чаплă музыкант пулăн, а эп... эх, Алим, такам та пулăпăр-ха

эпир. Сывпул! (*Алима ыталаса чуптурӗ те вӑрмана кӗрсе кайрӗ*).

Алим (*ун хыҫҫӑн*). Иван пичче, Чапая салам кала!

Иван (*вӑрмантан*). Калӑп, Алим, калӑп!

Алим. Кайрӗ. Татах пӗччен тӑрса юлтӑм. (*Такама хӑмсарнӑ пек.*) Ых, ирсӗрсем! Ялан мӑшкӑл кӑтартаймӑр пире... Чим-ха, Чапай килсе ҫиттӗр, кӑтартӑпӑр ун чух!.. (*Тӗм хыҫӗнче Сарпи апчху турӗ. Алим ун патне чупса пычӗ*). Кам эс? Тух!

Сарпи (*тӗм хыҫӗнчен хӑраса тухать*). Эп... эп... Сарпи.

Алим. Мӗн туса тӑратӑн кунта?

Сарпи. Кӗтӳ кӗтетпӗр...

Алим (*йӑвашланчӗ*). Кӗтӳ? Кӗтӗве тӗм хыҫне пытанса кӗтеҫҫӗ и вара?

Сарпи. Эп... эп эсир килсе тухасса пӗлмерӗм. Асаттене кӗтсе пытантӑм.

Алим. Эпир мӗн калаҫнине йӑлтах илтрӗн-и?

Сарпи. Ҫук. „Чапая салам кала", тенине ҫеҫ илтрӗм. Кам вӑл Чапай?

Алим (*савӑнарах*). Чапай-и? Илтмен-им эс ун ҫинчен?

Сарпи. Ҫук, илтмен.

Алим. А, эс кам майлӑ: хӗрлисем майлӑ и, е шуррисем майлӑ?

Сарпи. Эп... эп асатте майлӑ.

Алим. Ай, вай-вай, епле чее эсĕ. А, аслаçу кам майлă?

Сарпи. Урăх çынна каламăн-и?..

Алим. Эп элекçĕ мар.

Сарпи. Ман асатте Лелин майлă.

Алим (*савăнса*). Лелин мар, Ленин.

Сарпи. Ĕччĕ, Ленин çав.

Алим. Чапай та Ленин майлă. Хĕрлисен богатырĕ вăл. Анчах эс ун çинчен пит ан калаç... Леш çын çинчен те ан шарла, хăвнах йывăр пулĕ...

Сарпи. Çук, çук, Алим, шарламастăп.

Алим. Ай-вай-вай! Эс ман ята илтнĕ-çке?

Сарпи. Леш çапла кăшкăрчĕ те вăрмантан...

Алим. Ман эс ун çинчен... Ийя... Вăт, Сарпи, пĕр сăмахпа каласан, эпĕ—тăлăх ача. Ялтан-яла çӳресе чӳрече касатăп.

Сарпи. Чӳрече?

Алим. Ийя, ыйткаласа çӳретĕп.

Сарпи. Э-э... Манăн та атте-анне çук. Асаттепе иксĕмĕр çех пурăнатпăр. (*Вăрмантан Леврен мучипе ачасем тухрĕç*). Ав, ман асатте. (*Вĕсене хирĕç чупса кайрĕ*). Асатте, ăçта кайса çухалтăн эсĕ?

Леврен. Шыв ăсма кайрăмăр эпир, хĕрĕм. Кукăрти çăла.

Сарпи. Мĕн тăватăр çав тăварлă шывпа?

Сартуан. Пулă пĕçеретпĕр. (*Ачасем хăрăкĕсене вучах умне хураççĕ*).

Сарпи (*пулӑ витри патне пырса*). Ӑҫта-ха, пуллисем шултӑра-и?

Сартуан. Уланкисем шӗшлӗ аври пек, ҫӑрттанӗ пӗри—чавса тӑршшӗ!

Леврен мучи вучах умне чӗркуҫленсе ҫулу ҫапма пуҫлать.

Илюш. Асту, Сарпи, ҫыртать!

Сарпи. Ай, ай, ҫӑрттанӗ халь те чӗрӗ!

Сартуан (*Алим енне куҫӗпе кӑтартса*). Сарпи, кам вӑл? (*Ачасем пулӑ ҫурса таса-таҫҫӗ*).

Сарпи. Алим вӑл. (*Алима чӗнет.*) Алим, кил кунта. (*Аслашшӗне.*) Асатте, асту-ха, пирӗн хӑна пур паян.

Миша кӗрет. Алим ыттисем патнелле пырать. Пурте ун ҫине пӑхаҫҫӗ.

Леврен (*ҫулупа вут чӗртнӗ хыҫҫӑн ура ҫине тӑрса*). Хӑна пулсан, ыр сунатпӑр. (*Алима.*) Хӑш ялсем пулатӑн эс, ачам?

Алим. Ак-Ярсем, тетчӗ атте. Эп астумастӑп хамӑр яла. Ман атте-аннесем эп пӗчӗк чухнех кайнӑ унтан. Эпир Саркассинче кӗтӳ кӗтсе пурӑнаттӑмӑр. Атте-анне вилсен, эп ыйткалама тухса кайрӑм.

Леврен. Апла эс хамӑр ҫын иккен. Аван, аван, ачам. Сан аҫуна пӗлеттӗм эпӗ. Пит лайӑх ҫынччӗ вӑл. Ну, Сарпи хӗрӗм, тавай эппин, хӑна ту пире. Мӗнпур унта сан? Мӗн парса ячӗ Павӑл арӑмӗ?

...АВАСКА... КНИЖНАЯ ПАЛА... Чебоксары Чувашской АССР

Сарпи. Чăмăрла паранкă, уйран тата çăкăр. (*Апатне çерем çине сарать*).

Леврен (*апат çиме ларса*). Кил, Алим, лар. Çиер-ха мĕнпур пеккине. Ларăр, ачасем.

Сартуан. Çиййĕр эсир. Эпир кайран... Пулă пиçтĕр-ха. (*Пулă витрине вут çине сакать.*)

Алим. Хăвăра та сахал пуль те, ларам эппин...

Леврен. Нумай пĕтет, сахал çитет, теççĕ ачам... (*Леврен мучи, Сарпи тата Алим апат çиеççĕ, лешсем вучах умĕнче калаçса лараççĕ*).

Сартуан. Хыт кукар вăл, Хантар Павăлĕ. Хăй çĕрме-пуян пулсан та, ун арăмĕ, ав, паранкăпа уйран анчах парса янă.

Миша (*лăпкăн.*) А хăйсем ялан сĕт-çу та, аш-какай анчах кӳпсе пурăнаççĕ.

Илюш. Пирĕн пата черет çитсен, пирĕн анне Леврен мучисене кашнинчех пăтă пĕçерсе çитерет.

Леврен. Çынсем пурте сан аçу-аннӳ пек ырă кăмăллă мар çав, ачам.

Сартуан. Хам кĕтӳç пулсан, Хантар вырьăхĕсене веçех партизансем патне хуса кайăттăм-ха эпĕ.

Алим. Ой-йой, мĕнле хăюллă эсĕ! (*Ура çине тăрса*). Рэхмет, бабакайăм.

Леврен. Çимеллеччĕ-ха.

Алим. Тăраничченех çирĕм. (*Сартуана.*) Ăçта тăраççĕ-ши вăл партизансем?

Сартуан. Пĕлместĕп çав. Пĕлсен хам та кайăттăмччĕ вĕсем патне.

Сарпи. И-ий, мухтанчăк! Асту, партизан пулса ан кай. (*Çисе тăранчĕç. Сарпи апат юлашкине пуçтарать*).

Сартуан. Хĕрлисем килччĕр-ха. Ун чух курăн: мухтанчăк и эпĕ, мар-и.

Леврен. Е, ан тавлашăр, ачасем. Ан калаçăр ун çинчен. Инкекĕ инçе мар, тем те кăтартĕç, лешсен хăлхине кĕрсен... Пĕреххут пуллăра часрах пĕçерĕр-ха эсир. (*Хĕвел çине пăхса.*) Ав, хĕвел ăçтах кайнă. Тапăртан тухма та вăхăт.

Сартуан. Халех пиçет, Леврен мучи. Пулă çимесĕрех ан кайăр-ха.

Сарпи. Асатте, эп мансах кайнă санран ыйтма. Кам шăхлич каларĕ паçăр вăрманта? Эс мар пулĕ-çке?

Леврен (*Сартуана*). Вăт, Сартуан, каларăм вĕт сире... Сарпи те илтнĕ ав. Çук, хĕрĕм, эпĕ мар. Ăçтан ун пек калама пĕлем-ха эпĕ?

Алим вăрттăн кулать. Ăна Сарпи сисрĕ.

Сарпи. Мĕншĕн кулатăн, Алим? Элле эсĕччĕ-и вăл, шăхлич калаканни?

Алим (*вăтанса*). Эпĕччĕ.

Сарпи (*тĕлĕнсе*). Чăнах-и? (*Алим тавра пухăнаççĕ.*)

Алим (*курайне йĕннинчен кăларса*). Акă. Пирĕн пушкăртсем курай, теççĕ ăна.

Сартуан. Каласа кăтарт-ха пире.

Пурте. Кала-ха, кала...

Алим курайпа илемлĕ кĕвĕ вылять, пурте итлесе тăраççĕ. Çав вăхăтра сасартăк тапăрта ĕнесем мĕкĕрни, кĕтӳ тĕпĕртетни илтĕнме пуçлать. Алим курайне калама чарăнать. Пурте сулахаялла пăхаççĕ.

Леврен. Аçа çаптăрах! Мĕн мур пулнă ку выльăхсене?

Алим. Ай, вай-вай! Пăхăр-ха, кашкăр!

Сартуан. Кашкăр! Авă, авă!

Сарпи. Сурăха тытрĕ! .

Алим. Айтăр! (*Чупса кайрĕ*).

Леврен (*пушă йăтрĕ те кăшкăрса чупать*). Алялях!.. Мур пĕтермен!

Сартуан (*пӳрнине çăварне чиксе хыттă шăхăрать*). Алях! (*Чупса каять.*)

Сарпи. Ах, ах! Иккĕн вĕсем... Алим! Алим! Çывăха ан пыр. Асту, хăвна тытса çураççĕ! Ах, ах!.. Епле хăрамасть вăл!

Илюш (*йывăç тăррине хăпарасшăн тапаланать*). Миша, купарчаран тĕрт-ха.

Миша. Эй, хăравçă мулкач. (*Сарпине алăран тытса.*) Айта, Сарпи! (*Чупса тухса каяççĕ*).

Илюш. Тукмак хӳре, чул пилĕк—ху çулупа ху çӳре... (*Тапалана-тапаланах йывăç тăррине хăпарать.*) Кам сурăхне тытса çурчĕ-ши? Пирĕнне пулмасан юрĕччĕ. (*Аякал-*

*ла пăхса*). Ав, Павăл пиччесем килеççĕ. (*Кăшкăрать*). Павăл пичче! Часрах килĕр! Кĕтĕве кашкăрсем тапăнчĕç!.. (*Хыçалта кăшкăрни тата пушă шартлаттарни илтĕнет*). Тарчĕç. . Вăрмана кĕрсе кайрĕç. Паçăр Сартуан курнă кашкăрсемех пулĕ-ха. Хамăра тытса çинĕ пулсан, пĕтеттĕмĕр вĕт.

Сылтăмран уксах Çемен чупса кĕрет.

Илюш. Куккук!

Çемен (*Илюша курса чарăнчĕ*). Мĕн кăшкăрса ларатăн унта? Ăçта кашкăрсем?

Илюш. Кайран пултăн. Вăрмана тарчĕç.

Çемен. Асту, караппăл йăтса каять ак. (*Левренсем кайнă еннелле чупать.*)

Илюш (*хăраса çӳлелле пăхкалать*). Ăçта унта караппăл? (*Йывăç тăрринчен хăраса анать*).

Сылтăмран Хантар Павăлĕпе Куштан Якку кĕреççĕ. Павăл витре йăтнă, леш—сĕреке.

Павăл (*Илюша*). Эй, чĕпасси! Эс кăшкăртăн-и, кашкăр тесе?

Илюш (*çĕре анса вĕсем еннелле çавăрăнчĕ*). Эпĕ çав.

Якку. Ма суйрăн?

Илюш. Суйман çке. Эпир пушкăрт ачи курай каланине итлесе тăраттăмăр. Унччен те пулмарĕ, тапăрта ĕнесем мĕкĕрсе ячĕç, сурăхсем тĕр-тĕр чупма пуçларĕç... Пăхатпăр—кашкăрсем. Хăйсем тем пысăккĕш. Ма-

на шанмасан, ав, Леврен мучирен ыйтӑр хӑть. (*Кӑшкӑрса*). Сартуан!.. (*Сулахаялла чупса кайрӗ*).

Кайнӑ енченех Левренпе Ҫемен кӗреҫҫӗ.

Ҫ е м е н. Пӑшал кирлӗ те ҫав ун пек чух.

Л е в р е н. Ҫынна ҫын вӗлереҫҫӗ, а кашкӑрсене вӗлерекен те ҫук.

П а в ӑ л. Ну, мӗнле?..

Л е в р е н. Ӑҫтан килсе тухрӗҫ пуль, мур пӗтерменсем. Халиччен питех курӑнмастчӗҫ...

П а в ӑ л. Сиен тумарӗҫ-и кӗтӗве?

Л е в р е н. Турӗҫ ҫав, турран килесшӗсем, турӗҫ.

Ҫ е м е н. Икӗ сурӑха ҫурса кайнӑ.

Я к к у. Охо! Маххӑ паман.

П а в ӑ л (*Ҫемене*). Паллисене пӑхрӑн-и? Кам сурӑхӗсем?

Ҫ е м е н. Сирӗн.

П а в ӑ л (*ҫиленме пуҫласа*). Иккӗшӗ те-и?

Ҫ е м е н. Иккӗшӗ те.

Я к к у. Ку кӗтӳҫсене шансан — выльӑхсӑр та тӑрса юлӑн.

П а в ӑ л (*Леврене, хаяррӑн*). Ну, мӗн калас тетӗн, ват супнӑ?

Л е в р е н. Каҫар, Павӑл Егорчӑ, нимӗн калама та пӗлместӗп.

Я к к у. Мӗн калас тен-ха, кӗтӳне сыхлас вырӑнне шӑхлич каласа ларсан?

Леврен. Самантрах пулчĕ вĕт, самантрах...

Павăл (*Леврене сухалĕнчен тытса*). Ых, кĕлмĕç! парăп ак эп сана „самантрах"! Мĕнпе тӳлесе татас тетĕн сăтăр кӳнĕшĕн?

Леврен (*чĕтресе*). Мĕнпе тӳлес, Павăл Егорчă? Нимĕн те çук вĕт ман. Кĕтӳ кĕтнĕшĕн парас тырра тытса юлăн ĕнтĕ кĕркунне.

Якку. Ха-ха-ха! Туман тихан пилĕкне хуçакан. Епле ăслă вăл, акмасăрах выгасшăн. Халь тин çулла пулнă та, вăл кĕркуннехи çинчен калаçать.

Сарпи, Алим, Сартуан тата Илюшпа Миша кĕреççĕ те вучах умне пырса лараççĕ.

Павăл. Манран хĕллех кивçен илсе çинине мантăн-им, кĕлмĕç? Кĕркунне сана икĕ сурăх хакĕ чул мар, йыт хӳри те тивмест манран. Кай! (*Леврене тĕксе ячĕ.*) Эп урăхла тума та пĕлетĕп. Тыт, Çемен! (*Çемене пулă витрине парать те Сарпи патне хăвăрт пырса ăна аллинчен ярса тытать*). Икĕ сурăх вырăнне пĕр „путек" анчах илсе каятăп эпĕ.

Леврен. Ай, Павăл Егорчă, мĕн калаçатăн эсĕ?

Алим (*хуллен*). Ввот путсĕр!

Сарпи (*турткаланса*). Ой, яр, яр мана!..

Павăл (*тепĕр аллипе çапма хăмсарса*). Ан çухăр, чăхчĕппи! Эп сана пусса çиме ил-

се каймастăп вĕт, ача пăхма çеç илсе каятăп. Ман патра пурăнни, хир тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрени пулмĕ.

Леврен. Ан хăрат мана, Павăл Егорчă. Тархасшăн ун пек ан хăтлан.

Сарпи (*турткаланса*). Ой, яр мана!.. Асатте...

Павăл. Ну! Ну! Нĕрĕлти!..

Леврен (*Павăл умне ӳксе йăлăнать*). Павăл Егорчă! Ман пĕртен-пĕр савăнăçăма, пĕртен-пĕр телейĕме илсе ан кай, тархасшăн. Хĕрхен мана, мĕскĕн ват çынна.

Павăл. Суратăп эп сан телейу çине. Кай, ан сыпăç! Кĕркуннечен пурăнтăр-ха ман патра, унтан—курăпăр... (*Сарпи çапкаланать*). Ну, ну!..

Якку. Илемлĕ хĕрачана кĕтӳ хыççăн çӳрени килĕшмест. (*Çемене сĕрекине парса*). Ме, Çемен, йăт. Ывăнтăм эпĕ.

Алим (*Сартуана*). Путсĕрсем! Пăшал пулсан, халех персе пăрахăттăм.

Сартуан. Шел Сарпине, анчах пулăшма çук.

Леврен (*йĕре-йĕре*). Павăл Егорчă, чунсăр мар вĕт эсĕ!.. Тур пул тархасшăн... Ан илсе кай тăлăха...

Павăл. Хуп çăварна! (*Сарпине тĕксе*). Ут, нĕрĕлти! (*Сарпине çавăтса илсе каять. Яккупа Çемен ун хыççăн утаççĕ*).

Л е в р е н (*çĕрте упаленсе*). Чунсăр этем! Мĕншĕн ирĕксĕр илсе каятăн ман хĕре? Вăл айăплă мар вĕт...

А л и м. Мĕн йăлăнатăн çавăнтан, бабакай? Чĕресĕр вĕт вăл. Вăйпа илекенрен сăмахпа илме çук.

Л е в р е н (*ача пек йăваланса йĕрет*). Ай, Сарпи, хĕрĕм... Ах, ылттăнăм. . (*Ачасем старике сырса илчĕç. Пурте ăна йăпатма тăрăшаççĕ*).

М и ш а. Шуйттансем!..

И л ю ш. Ан макăр, Леврен мучи.

С а р т у а н. Кашкăрсем килчĕç те сурăхсене тытса кайрĕç. Хантар Павăлĕ килчĕ те çынна тытса кайрĕ. Этем-и вăл? Хĕрлисем анчах килччĕр...

А л и м. Ан макăр, бабакайăм. Эпир сана пĕччен хăвармăпăр. Йывăр пулин те, тӳс пĕрикĕ куна. Унтан, унтан Сарпи татах пирĕнпе пĕрле пулĕ. (*Аякра тупă сассисем илтĕнеççĕ*). Илтетри ав, епле тупă сассисем кĕрлеççĕ. Ирĕке тухасси нумай юлмарĕ. (*Сылтăмалла аллине тăсса*). Лерен, Белебей панчен, пире пусмăртан хăтарма паттăр Чапай килет!

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ АКТ

Леврен мучи пурăнакан тĕксĕм пӳрт. Çĕрле. Пĕчĕк сĕтел çинче „чĕпкуç“ лампа çунса ларать. Пӳлĕмре икĕ пĕчĕк чӳрече. Вĕсене улăмран çыхса тунă каркăç-па карнă. Сулахайра кăмака. Ун хысĕнче вырăн пул-малла, анчах вăл курăнмасть. Леврен мучи пукан çинче ларать. Вăл, çăпата саплана май, юмах калать. Алимпа Сартуан урайĕнче улăм çинче итлесе выртаççĕ. Леврен мучи юмахне каласа пĕтериччен Алим тăрса чӳречерен урамалла пăхать те, татах хăй вырăнне выртать.

Леврен (*юмахне малалла тăсса*). Çан-талăк сĕм тĕттĕм. Иван урхамахĕ çил пек вĕçет. Анчах хура çĕлен чашкăрни те çыв-харнă çемĕн çывхарать. „Мĕн тăвас?“ — тет Иван. Урхамахне чарса çĕленпе çапă-çĕччĕ — нимле хĕçпăшал та çук. Пытанас? Çĕлен куçĕсем пурпĕрех шыраса тупаççĕ. Çав вăхăтра таçта аякра йăлтăр-ялтăр вут çути курăнса каять. Пĕрех тапса сикет ур-хамах, вут çути умне çитсе те тăрать. Ку çутă тимĕрçĕ лаççи пулнă иккен. Иван, ур-хамахĕ çинчен сиксе анать те, лаççа кĕрсе каять, алăкне питĕрсе хурать. „Мĕн тăватăн,

ырă çынăм?"—тесе ыйтать вăл тимĕрçрен. „Хура çĕлен пуçне касма тĕнче богатырĕ валли хĕç шăратса хыватăп", тет тимĕрç. „Тĕнче богатырĕ эпĕ пулатăп", тет Иван. Хăй часрах тимĕрçе пулăшма пуçлать: вĕркĕçне вĕртет те хĕçне хĕртет, тимĕрç çичĕ пăтлă мăлатукĕпе шаккать. Çав вăхăтра хура çĕлен чашкăрса çитет те, Иван урхамахне хыпать-çăтать. „Лаши астивмелĕх çеç пулчĕ. Уç алăкна, чура тимĕрç, хăйне хыпса çăтам!" тет хура çĕлен. „Халех уçатăп. Малтан эп ăна юпа çумне сăнчăрласа хурам-ха", тет тимĕрç. Хăй вăл çаплах хĕçне туптать. Туптаса пĕтерет те хăйрама пуçлать. Çĕр пăтлă çавра хăйрине Иван савăрса тăрать. Хура çĕлен алăк уçасса кĕтет-кĕтет те, çавтери çиленсе çитет. Пĕрех килсе çапать вăл хăйĕн хӳрипе тимĕрç лаççине, лаç таçта çити ыткăнса каять. „Э-э, çаклантăр-и! Ну халь иксĕре те хыпса-çăтатăп!" тет хура çĕлен, хаяррăн чашкăрса. „Тыт, Иван!"—тет тимĕрç, Ивана çап-çутă хĕç тыттарса. Иван хĕçне ярса тытать те: „Кама-кам вĕт!—тет çĕлене хирĕç тăрса.—Этем ӳчĕ шăмăллă, çĕлен ӳчĕ шăмăсăр". Иван çапла калать те, асар та писер çапăçу пуçланать. Çĕлен Ивана пĕрре килсе çапать те, Иван тайăлса каять. Тепре килсе çапать те, Иван чĕркуç таран çĕр айне анса ларать. Тата тепре хӳрине савăрса çапать те çĕлен, Иван мăй таран çĕр айне

анса ларать. „Пĕтрĕм иккен“, тет Иван. Анчах çав вăхăтра тимĕрç чупса пырать те Ивана çĕр айĕнчен çăлса кăларать. Иван тухнă-тухманах çутă хĕçне вылятса аça-çиçĕм пек килсе çапать те, çĕлен пуçĕ пат татăлса ӳкет. Тепре килсе çапать те, çĕлен хырăмĕнчен урхамах тухса кĕçенсе ярать. Тата тепре килсе çапать те Иван, çĕлен хырăмĕнчен малтан уйăхпа çăлтăрсем, унтан хĕвел тухса пĕлĕт тăрăх шуса каяççĕ. Çапçутă пулса тăрать хайхи тĕнче. Пур çĕрте те кайăксем савăнса юрласа яраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери çынсем: „Телей çитрĕ!“—тесе савăнаççĕ. Иванпа тимĕрçе мухтаса хитре юрăсем юрлаççĕ. Халĕ те пулин савăнса пурăнаççĕ. (*Кĕске пауза*).

Алим (*вăрăммăн сывласа ярать*). Эх!..

Сартуан. Аван юмах.

Алим. Питĕ шеп юмах!

Сартуан. Манăн та çав Иван пек паттăр пуласчĕ, мĕнпур шуррисене тураса тăкаттăм.

Алим. Элле хĕрлисен ун пек паттăрсем çук тетĕн-и?

Сартуан. Пĕлместĕп.

Алим. А эп пĕлетĕп: пур.

Сартуан. Кам?

Алим. Чапай! (*Иккĕшĕ те тăрса ларчĕç*).

Сартуан. Курасчĕ ăна!

Алим. Вăл халь Белебей панче çапăçать, тет.

Леврен. Эй-яй-яй. Мĕн чул çын пĕтрĕ пуль ĕнтĕ ку вăрçăпа. Çаплах çапăçаççĕ-ха. Çăмăлах мар иккен тĕнчене улăштарма... Анасшăн мар харам пырсем пирĕн ĕнсе çинчен. Лайăх вĕсене пире пусмăрласа, мăшкăласа пурăнма. Ав, Хантар Павăлĕ, мĕн хăтланчĕ ĕнер. Сарпине, чĕппе хурчăка тытса кайнă пек, тытса кайрĕ.

Алим. Их, бабакайăм, эсĕ пăртак çамрăкрах, эпир кăшт пысăкрах пулнă пулсан, ниепле те парса ямастăмăр Сарпине.

Сартуан. Хĕрлисем килччĕр-ха, ун чух Хантар Павăлĕнчен пĕччен те хăрамастăп эпĕ. Каятăп та илсе килетĕп Сарпине.

Алим. Халех илсе килесчĕ ăна.

Леврен (*çăпатине сапласа пĕтерчĕ*). Эх, Сарпи хĕрĕм, сан валли çăпатуна сапларăм акă. Анчах эс курса савăнаймастăн. Мĕнле тӳссе, мĕнле чăтса пурăнатăн-ши çав ирсĕр этем панче. Ĕнер, эп каçхи апат илме пырсан, курма та кăлармарĕç вĕт сана. Калаçса чуна пусарма та ирĕк памарĕç. Сартуан калашле, хăçан çитĕç-ши хĕрлисем?

Алим (*Леврен мучине пилĕкрен ыталаса*). Ан хуйхăр, бабакайăм. Нумаях тăмĕç, часах çитĕç акă. Сарпи те татах пирĕнпе пулĕ. Выртса çывăр-ха ĕнтĕ эс, кан. Çĕркаç та çĕрĕпех чĕлĕм туртса лартăн. (*Леврен му-*

*чине ыталаса кăмака патне çавăтса пырать. Леврен мучи кăмака хыçне хăпарса выртать. Алим чӳречерен пăхре те каллех Сартуан çумне кайса ларчĕ. Вĕсем пĕрнепĕри куçран пăхаççĕ*).

Сартуан. Алим, эсĕ те çывăрасшăн пуль ĕнтĕ. Каяс пуль ман...

Алим. Çук, Сартуан. Мана çывăрма... Ман çывăрас килмест. (*Тăчĕ*). Эс лар-ха. Эп йăпăрт тухса кĕрем. (*Тухса кайрĕ*).

Сартуан. Мĕншĕн ялан туха-туха кĕрет-ха вăл? Чӳречерен пăхать... Тем тесен те ахаль мар. (*Хытăрах*). Леврен мучи, çывратни эсĕ?

Леврен (*кăмака хыçĕнчен*). Çук-ха, ачам, çывăраймарăм ха.

Сартуан. Леврен мучи, мĕнле пек сан шутпа: Алима шанса калаçма юрать-и, çук-и?

Леврен. Алим—шанчăклă çын ачи. Ăçта кайрĕ-ха вăл?

Сартуан. Тула тухрĕ. Пĕрмаях тула тухать.

Леврен (*ăнланмасăр*). Варĕ пăсалнă пуль. Е, выртăр ĕнтĕ, çывăрăр. (*Шăпланчĕ*).

Сартуан (*хуллен*). Хăюллă вăл. Унпа юлташлă пулма та лайăх: Анчах хамăр ялсем мар.. (*Аллине кĕсьине чиксе*). Кăтартам-ши, кăтартам мар-ши? (*Кĕсьинчен пĕчĕк пăшал кăларать те алăк еннелле тĕллет*). Ых!.. (*Алим кĕрет. Сартуан пăшалне хăвăрт чиксе хурать.*)

**Алим.** Сартуан, тупă сассисем çывхарах илтěнеççě пек.

**Сартуан.** Кама курса переççě-ши çěрле?

**Алим.** Тупăран курмасăрах лектереççě.

**Сартуан.** Алим, пěр сăмах ыйтсан, чăннипе калăн-и?

**Алим.** Ыйт. Калăп муш.

**Сартуан.** Кама кěтетěн эсě?

**Алим.** Ай, вай-вай, епле вăл!..

**Сартуан.** Кала ěнтě, шел-им сана?

**Алим.** Шуррисене кěтетěп.

**Сартуан** (*сиксе тăчě*). Шўт тăватăн!

**Алим.** Çук, чăн калатăп.

**Сартуан** (*аллине кěсьине чиксе*). Апла эс шуррисем майлă?!.

**Алим.** Çук.

**Сартуан.** А, мěншěн кěтетěн тата вěсене?

**Алим.** Ман аттене шуррисем персе вěлерне те, эс мана шуррисем майлă тăвасшăн? Пěлетни эсě: шуррисене чунтан-вартан кураймастăп эпě. Пěр ěç чарман пулсан, эп халиччен тахçан, хěрлисем патне çитсе, шуррисене хирěç çапăçма кайнă пулăттăм. (*Пауза*). Сартуан, эп сана шанатăп. Эс мана пулăшма тивěç.

**Сартуан.** Кала, Алим, мěн тумалла?

**Алим.** Анчах асту, Сартуан, чěлхўне хытă тыт!

Сартуан. Шанмастăн пулсан, акă—тыт! (*Пăшалне кăларса парать*). Эхер эп кама та пулин каласан—пер те пăрах мана.

Алим (*пăшалне пăхкаласа*). Ăçтан илтĕн?

Сартуан. Пичче салтакран илсе килнĕччĕ. Херлисем панче вăл, командир.

Алим (*пăшалне каялла парса*). Ме, чиксе хур. Хăвăнтах пултăр.

Сартуан (*пăшалне илсе*). Юрĕ эппин. Ну, кала, мĕн тумалла?

Алим. Пĕр красноармеец мана пакет парса хăварчĕ. Шуррисем сирĕн яла çитсенех, çав пакета Саркассине леçес пулать.

Сартуан. Кам патне? Элле хĕрлисем пур-и унта?

Алим. Çук. Сахрун ятлă коммунист арăмĕ патне.

Сартуан. Хура Сахрун-и?

Алим. И-я.

Сартуан. Ман кукка вĕт вăл.

Алим. Ну?

Сартуан. Чăнах. Мĕн çырнă-ши пакет ăшне?

Алим. Эс вулама пĕлетĕн-им?

Сартуан. Çук. Вĕренмен эпĕ. Шкул çук пирĕн ялта.

Алим. Саркасси кĕперне сиктересси çинчен çырнă унта.

Сартуан. Мĕншĕн?

Алим. Шуррисем каҫса ан тарайччăр тесе.

Сартуан. Ҫĕрле каймалла пулсан?

Алим. Каятăп.

Сартуан. Ҫуранах каяс тетĕн-и?

Алим. Лаша ҫук вĕт ман.

Сартуан. Эх, хамăрăн пулсан... Алим, эпĕ те пыратăп санпа пĕрле. Юрать-и, э?

Алим. Юрать, Сартуан. Эп ҫавна анчах кĕтетĕп санран. Тавай тупа тăвар?

Сартуан. Мĕн тесе?

Алим. Пĕри теприншĕн вутпа шыва та кĕме хатĕр пулатпăр тесе. (*Кăсьинчен пэккине тата ҫăкăр татăкĕ кăларать*).

Сартуан. Эп яланах хатĕр!

Алим. Акă, ку пэкке ҫав красноармеец пачĕ. Унпа Чапай хăй ҫăкăр касса ҫинĕ, тет. А, эпир ун вĕҫĕнчен приҫак ҫиетпĕр. (*Пэкки вĕҫне ҫăкăр тирет*). Тавай харăс калар.

Харăс. Иксĕмĕр туслă пулса, пĕр-пĕриншĕн вутпа шыва та кĕме хатĕр пулатпăр!

Алим. Хып. (*Сартуана ҫĕҫĕ вĕҫне тирнĕ ҫăкăрне хыптарать, унтан татах тирсе хăй хыпать*).

Сартуан. Ну, халь выртса ҫывăр ĕнтĕ эсĕ. Эп хурал тăратăп. Унтан эсĕ тăрăн.

Алим. Ҫывăрас килмест-ха ман.

Сартуан. Эп тухса итлесе кĕрем-ха: килмеҫҫĕ-и шуррисем. (*Тухса каять*).

Алим (*чӳречерен пырса пăхать*). Тĕттĕм... Лери пушар халь те сӳнмен-ха. Вăрçă панчи ялсем веçех çунса пĕтеççĕ пулмалла. (*Пукан çине пырса ларчĕ. Тăрса курайне илчĕ. Татах ларчĕ*). Иван пичче ăçта-ши халь? Çитейрĕ-ши Чапай патне? Часрах килĕçинчĕ. (*Курайпа малтан хуллен, унтан манса кайса, хытăран хытă „Смело товарищи" вылять*).

Леврен (*тăрса ларчĕ*). Алим, выртса çывăр ĕнтĕ, ачам. (*Алим илтмерĕ. Леврен мучи татах выртрĕ*).

Сартуан васкаса кĕрет.

Сартуан. Алим! Ухмаха ертĕн-им? Чарăн. (*Алим вылямa чарăнать*). Урамра куштан Якку янрашса çӳрет. Ӳсĕр пулмалла.

Алим. Питĕр алăка.

Сартуан (*алăкне питĕрет*). Ма çапла хытă калатăн çĕрле?

Алим. Мансах кайнă эпĕ... Пĕлетни, мĕнле юрă вăл?

Сартуан. Вырăсла юрă.

Алим (*хуллен юрлать*).

Смело, товарищи, в ногу,
Духом окрепнем в борьбе...

Тулта Якку сасси.

Сартуан. Ан юрла, Алим. (*Алим чарăнчĕ*).

Якку (*тултан алăка шаккаса*). Эй, Леврен мучи! Уç алăкна! (*Алим алăк патне пырать*).

Сартуан. Ан уç, Алим, ан уç!

Якку (*хытă шаккать*). Эй, Леврен тени! Илтетни! Уç часрах!

Леврен (*кăмака хыçĕнчен тăрса тухать*). Кама çĕр-хута шуйттан сĕтĕрсе çӳрет-ши çапла?

Сартуан. Куштан Якку вăл, ан уç, Леврен мучи.

Якку (*алăка çĕмĕрес пек шаккать*). Уçатни, çук-и? Вашу-машу чорт побил!

Леврен. Уçас ара. Кĕрсе тухтăр. Кĕртмесен, кайран тем кăтартĕ. (*Алăкне уçать*).

Элес-мелес саркаланса Якку кĕрет.

Якку (*алăк урлă ура ярса пуссанах*). А-а, эсир те кунта-а! Но-о! Мĕн хăраса ӳкрĕр? Кашкăр-им эпĕ? (*Алимпа Сартуан кĕтесре хĕсĕнсе тăраççĕ. Якку, алăка уçах хăварса, вĕсем патнелле утса кайрĕ. Леврен алăкне пырса хупрĕ*).

Сартуан (*Якку çине пăхса*). Ха-ха-ха!.. Пăх-ха, Алим. Епле илемлĕ вăл: пылчăк çинче йăваланнă сысна пек.

Якку. Но! Шăпăрлан!.. (*Сартуана çапма хăмсарать, леш тарса каять*). Кала шăхличне, пушкăрт чĕппи! Ташă çемми кала, ман ташлас килет.

**Алим.** Пĕлместĕп эп ташă çемми калама.

**Якку** (*Алима çухаран тытса силлет*). Суятăн, пушкăрт! Кала!..

**Леврен.** Кала, Алим, кала. Ташласа савăнтăр çын, ташласси килнĕ чух.

**Алим.** Ташла эппин, ула пит. (*Ташă çемми калать*).

**Якку.** Во-о! (*Ура тапса илет*). Эпир хушсан итлемесен нельзе! Эп вĕт—ял писарĕ! Яков Харлампейчă! (*Ташлан пекки туса.*) Хай-ляй, лимпа-тумпа... хоппи-хоп та хоппи-хоп! Чижик рюмку выпивал, а я цельну бочку. (*Алима.*) Лайăхрах кала, пушкăрт чĕппи! Алă çуп, Леврен мучи. (*Леврен алă çупать*). Ах ты, касса яр! (*Тата кăшт ташлать те, чарăнать*). Леврен мучи, пĕлетни, мĕншĕн килтĕм эп?

**Леврен.** Шăхлич сассине илтсе кĕтĕн пуль. Ташлассу килчĕ пуль.

**Якку.** Çок! Эп сана ырă хыпар калама килтĕм. Пĕлетни, мĕн? Эп сан кĕрĕвĕ пулатăп: Сарпине качча илетĕп.

**Алим** (*хуллен*). У-у, путсĕр!

**Леврен.** Ах тур, Якку, ачам, тем каласан эс.

**Якку.** Ма тĕлĕнтĕн пит? Элле суять тетни? Яков Харлампейчă кĕтӳç хĕрне илес çук тетни? Çо-ок, хĕрĕ хитре пулсан, кĕтӳçне-мĕнне тиркесе тăмастăп эпĕ.

**Леврен.** Халь эс ăна... Ăсна çухатрăн-им?

Якку. Пĕлетни, ухмах старик, мĕншĕн Хантар Павăлĕ Сарпине хăй патне илсе кайрĕ? Э? Пĕлместĕн-им? А эп пĕлетĕп. Ço-ок, Сарпине Павăл патне хăварма юрамасть. Ун панче усал хăнасем нумай пулаççĕ. Унта усриччен, хам качча илетĕп эп Сарпине...

Леврен (*măшкăланине тўсеймесĕр*). Чĕлхў типсе хăртăрах! Çылăха та пĕлместĕн, ача çинчен ун пек калаçма. Намăссăр эсĕ!

Сартуан. Путсĕр этем эсĕ!

Алим. Тухса кай кунтан!

Якку. Но, но, шăхличсем! Сиртен ыйтмаççĕ. Тĕкех тăрăр эсир, атто!..

Алим. Тухса каймастăн-и ырăпа?! (*Курайне çанни ăшне чиксе револьвер пек туса тытать*). Тухса кай, шуйттан пуçĕ! (*Яккăва пăшалпа тĕлленĕ пек туса*). Ну!..

Якку (*чухласа илеймерĕ. Хăраса*). Ух ты!.. Пăш... пăшал? Камăнне вăрларăн, малакасос?!

Алим. Сана мĕн ĕç? Тухса кай часрах, путсĕр! Атту перетĕп! Пĕрре... иккĕ!..

Якку (*алăк патнелле чакса*). Ых, негодяй! Чим-ха, эп сире куншăн!.. (*Хăвăрт тухса кайрĕ. Тулта юрласа кайни илтĕнет*).

Сартуан (*кула-кула*). Епле хăвăрт тухса шурĕ.

Алим (*курайне çанни ăшĕнчен кăларать*). Хапи анчах вĕт ун. Чĕри—чăх чĕри.

Леврен. Ах, мур илесшĕ пуçне! Мĕн хăтланса çӳрет вăл. Кĕрсе мăшкăлам-ха, терĕ пуль. Путсĕр этем.

Сартуан. Курайран хăраса тарчĕ. Алим, чăн-чăннипе тĕлленĕ пулсан, тупата вăт йĕммине варалатчĕ вăл! (*Кулаççĕ*).

Леврен. Пулать иккен тĕнчере намăссăр, кĕççе пит. Эй, яй-яй .. (*Татах кăмака хыçне кайса выртать*).

Алим (*хуллен*). Сартуан, шуррисем киличчен Сарпине хăтарас пулать пирĕн. Тем те кăтартĕç вĕсем...

Сартуан. Мĕнле хăтарас-ха?

Алим. Каятпăр та вăрттăн илсе килетпĕр. Эп пĕлетĕп вăл ăçта выртнине. Паян юри Çеменрен ыйтса пĕлтĕм.

Сартуан. Айда, халех каятпăр, апла пулсан?

Алим. Айда!

Иккĕшĕ те чĕрне вĕççĕн утса алăк патнелле пыраççĕ. Çав вăхăтра Сарпи килсе кĕрет.

Алим (*хавассăн*). Сарпи! Ай, вай-вай!

Сартуан (*тĕлĕнсе*). Сарпи?

Сарпи (*хавассăн*). Алим! Сартуан! (*Иккĕшне те ыталаса илет*). Асатте ăçта? Сывăрать-и?

Леврен (*тăрса ларчĕ*). Ай, турăçăм... Сарпи сасси мар-и çав?

Сарпи (*аслашшĕ патне чупса пырса ăна ыталаса илет*). Асатте! Савнă асатте!..

Леврен (*Сарпине çупăрласа*). Сарпи, хĕрĕм... Епле хăтăлса килтĕн? Ах, пепĕккем... Ай, мăнтарăн янаварăм. Епле килме хăрамарăн çĕрле?

Сарпи (*сиксе тăрса*). Эп халь нимрен те хăрамастăп. Алим, эп сана курас тесе чупса килтĕм. Атя-ха кунтарах. (*Алима айккинелле çавăтса каять.*) Алим, Алим, вĕçтер часрах Саркассине.

Алим. Мĕн тума?

Сарпи. Пакет леçме.

Алим (*пĕлмĕше хывса*). Мĕнле пакет?

Сарпи. Ай-вай-вай, ачам, ман умра тунаймăн. Эп тапăрта веçех курса тăтăм вĕт.

Алим (*кулса*). Шпион эсĕ. Шуррисем килччĕр-ха, вара кайăп.

Сарпи. Шуррисем килнĕрен калатăп та.

Алим. Тупата-и?

Сарпи. Тупата. Хантар Павăлĕ патне кĕчĕç. Эп кайри пӳрт чӳречинчен вăрттăн тухса килтĕм. Аслă çул тăрăх татах сасăсем илтĕнеççĕ.

Леврен. Мĕн вăрттăн калаçатăр эсир унта?

Алим. Сартуан, шуррисем килеççĕ, тет.

Сартуан. Чăнах-и? Часрах чупар апла пулсан.

Сарпи. Эсĕ те-и, Сартуан?

Сартуан. Эпĕ те.

Леврен. Ăçта каяс тетĕр тата çĕрле?

Алим. Ёç пур-ха пирĕн, бабакай.

Сарпи. Еччĕ çав, каясах пулать вĕсен, асатте.

Сартуан. Алим, айда пиччесен лашине утланса вĕçтеретпĕр? Пахчинчех курăк çисе çӳрет вăл.

Алим. Вот ку шухăш! (*Курайне илсе.*) Кăна хамран хăварас мар-ха: кирлĕ пулĕ. Айда, Сартуан!

Сарпи. Астăвăр, сыхланса кайăр, Алим.

Алим. Сывă юлăр!

Сартуан. Ирхине каялла çитетпĕр.

Алимпа Сартуан тухса каяççĕ.'

Леврен (*Сарпине ыталаса*). Ах, хĕрĕм, эсир те вăрçăлла вылямă пуçларăр. Самана улшăнатех иккен.

ЧАРШАВ.

## ВИҪҪЁМЁШ АКТ

### 1-мӗш картина

Хантар Павăлӗн ҫуртӗнчи пӳлӗмсенчен пӗри. Икӗ енче икӗ алăк. Тӳрех тата сулахайра чӗнтӗр карнă икӗ чӳрече. Сулахай кӗтесре сӗтел, виҫ-тăватă пукан тата пӗчӗк шкаф. Икӗ чӳрече хушшинче пысăк тӗкӗр. Маччаран „молния" ҫакăнса тăрать. Сулахайра алăк панче сарлака сак. Тӗттӗм пӳлӗме хунар йăтса Хантар Павăлӗ кӗрет. Вăл сулахайри алăк патне васкаса пырать.

Павăл (*алăкне уҫса*). Кин, кин! Вăран-ха часрах. Тăр. Хăнасем килчӗҫ. Илтетни? Тăр. Тухса лампăна ҫутса яр-ха хăвăртрах. (*Каялла тепӗр алăк патнелле утса*). Ёҫсем меллех мар пулмалла. (*Тухса каять*).

Тепӗр пӳлӗмрен ҫурта тытса Настя тухать.

Настя. Мӗн хăни тата ҫӗрле! Ҫынна тутлă ыйăхран вăратса ҫӳреҫҫӗ. (*Пукан ҫине тăрса лампине ҫутать*). Ырă ҫынсемех ҫӳремеҫҫӗ пуль-ха ҫӗрхута. Лайăх тӗлӗк курса выртаттăм, вăратрӗҫ, шуйттансем. (*Сӗтел панчи чӳречине уҫса ячӗ*).

Мараҫ кӗрет.

Марас. Пирĕн Çеруш хăçан çапла килсе кĕрĕ-ши?.. Ах, тур, тур, кинĕм! Чипертерех тумлансам тархасшăн.

Настя. Кам килнĕ ара?

Марас. Шуррисем, тет. Йăпăрт тумланса мана пулăшма пырсамччĕ, кинĕм.

Настя. Вăрат Сарпине. Пĕчĕк ача мар, кайран та çывăрĕ.

Марас. Çывăрмасть-ха вăл, ача сиктерет.

Настя. Кунта килнĕренпе йăлтах кухарка пулса кайрăм ĕнтĕ.

Марас. Ара, кинĕм, эс апатне тутлă пĕçеретĕн-çке. Пĕри офицер, тет вĕт.

Настя (*вăрттăн хĕпĕртесе*). Юрĕ, ани, халех пыратăп. (*Хăй пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ*).

Марас (*кинĕ хыççăн*). Нипуç, вĕреннĕ çынсемпе таккуй калаçассу килет пулĕ-ха. (*Шкафран сĕтел çитти илсе сĕтелли çине сарать*). Тен, Çеруша паллакан çынсем пулĕç те... (*Тухса каять*).

Настя урăхла тумланса тухать.

Настя (*тĕкĕр умне тăрса çаврăнкала-çаврăнкала пăхать*). Ах, çук, çук. Килĕшмест ку платьепе çĕрле. Манашка пекех курăнать. Хăшне тăхăнам-ши? Ялта пурăнса модăран та кая тăрса юлтăм. (*Татах пӳлĕмне кĕрсе каять*).

Хантар Павăлĕпе офицер Поляков кĕреççĕ.

Павăл. Пожалстă, ваше благороди. Вырнаçăр çак пӳлĕме.

Поляков. Спасибо, Павел Егорыч. (*Йĕритавра пăхса*). Чаплă пӳлĕм! Окоп хыççăн, рая çакланнă пекех туйăнса кайрĕ кунта. (*Полевой сумкине сĕтел çине хывса хучĕ, ларчĕ те, хутпа карандаш кăларса çырма пуçларĕ*).

Павăл. Чул çурт лартма шутлаттăмччĕ те çав,—пулмарĕ. Самани пăсăлса кайрĕ.

Поляков. Пĕр пăсăлнă япалана юсама çăмăл мар. (*Çырать*).

Павăл. Епле-ха, ваше благороди мухтавлă Россия çарĕсĕм çара пакартасене çапса хуçаймаççĕ халиччен? (*Офицер чĕнмест*). Козьма Крючковсем çук çав халь пирĕн.

Поляков. Крючковсем мар, Чапаевсем кирлĕ пире, анчах вĕсем хĕрлисем панче.

Павăл. Кам вара çав Чапаев? Пур çĕрте те ун çинчен анчах калаçаççĕ.

Поляков. А, ну его, к чорту! Калаçас та килмест...

Павăл. Виноват, ваше благороди. Чăрмантарас мар сире. Ывăннă эсир.

Поляков. Ывăнни те, выçăхни те—пурте çавăнта.

Павăл. Халех, халех, ваше благороди. Хĕрарăмсем хатĕрлеççĕ унта. Кайса вăскатам-ха.

Поляков. Ман денщика ярăр-ха кунта.

Павăл. Ярăп, ваше благороди. (*Тухса каять*).

Поляков. (*Тăрса уткаласа çӳрет*). „Мухтавлă Росcия!“ Ылттăн сăмахсем! Анчах, ылттăнĕ навус тĕшне те тăмасть. (*Тĕкĕр умне тăрса уссине пĕтĕрет*).

Настя (*алăкран пуçне кăларса пăхать те, хупса шаккать*).

Поляков. Кам унта?

Настя. Тухма юрать-и сирĕн пата?

Поляков (*якалса илет*). Пожалуйста, пожалуйста.

Настя тухать. Вăл урăх платьепе.

Настя. Здравствуйте, господин офицер!

Поляков. Здравствуйте, мадам! (*Ăна хирĕç утса*). Ăçтан килсе тухрĕ ку ангел?

Настя. Ах, ан кулăр тархасшăн.

Поляков. Кампа калаçса савăнма телейĕм пур-ши?

Настя (*тайăлса илет*). Анастасия Петровна, прапорщик Хандаров мăшăрĕ.

Поляков (*честь парса*). Офицер Поляков, Ипполлит Васильевич! (*Настя аллине чуптуса*). Питĕ, питĕ хавас сирĕнпе паллашма! Шанатăп, прапорщик Хандаров чĕрĕ-сывах пулĕ-ха?

Настя. Тавтапуç. Сывах тесе çырнăччĕха.

Поляков. Весьма приятно! Какое счастье видеть прелестную особу в таком диком уголке! (*Настя аллине чуптăвать*).

Настя. Ах, тархасшăн комплиментсăр калаçăр. Вăтантаратăр эсир мана.

Поляков. Нет, Анастасия Петровна, это не комплимент! Это чистейшая правда! Да-м... (*Настя аллине чуптăвать*).

Вăрăм салтак кĕрет.

Сашков (*честь парса*). Ваше благороди!..

Поляков (*сасартăк çавăрăнса*). Дурак! Шаккаса кĕреççĕ ăна. Скотина!

Сашков. Виноват, ваше благороди!

Поляков. Халех Петровпа Иванова илте, ял тавра пăхса çавăрăн!

Сашков. Слушаюсь, ваше благороди!

Поляков. Марш! (*Сашков хăвăрт çавăрăнса тухса каять*). Ăçта ĕнтĕ „Мухтавлă Россия" çинчен калаçма, çавăн пек ухмах салтаксемпе. (*Настяпа иккĕшĕ те лараççĕ*).

Настя. Неужели хĕрлисем çĕнтерĕç-ши?

Поляков. О, çук, Анастасия Петровна! Çĕршыва варвăрсен аллине памастпăр. Шăлпа çыртса та пулин çиеле тухатпăрах! Европа! Вот кам çине шанатпăр эпир.

Настя (*офицера куçран мĕскĕнĕн пăхса*). Пĕлсенччĕ эсир, мĕнле хăрушă, кичем капла пурăнма!..

П о л я к о в. Понимаю, понимаю, Анастасия Петровна. Но, ничево. Пăлхавçăсен кунĕ нумай юлмарĕ. Эпир вĕсене тимĕр кашăлпа хĕснĕ пек хĕссе илтĕмĕр.

Н а с т я. Анчах кăшăлĕ темĕн каялла тапать: хĕсес вырăнне чаксах пыратăр.

П о л я к о в. Отступление тоже есть искусство войны.

Н а с т я. Йăлăхтарчĕ ĕнтĕ. Капла нимĕнсĕр те тăрса юлăпăр-ха.

П о л я к о в. Нет, цивилизация этого не допустит. Все было наше и все будет наше! (*Настя аллине чуптăвать*).

Н а с т я. Дай бог, дай бог!

Павăлпала Мараç кĕреççĕ. Упăшки самовар, арăмĕ ĕçме-çиме йăтнă.

П а в ă л. Виноват.

Н а с т я (*ура çине тăрса*). Ах, ани, хăнапа калаçса мансах кайнă эпĕ...

М а р а ç (*кинне*). Ларах, кинĕм, лар. Хамах майлаштартăм ĕнтĕ... Чей чашкисем кăлар-ха эппин эс. Нўхрепе кайса килем-ха эп... (*Тухса каять*).

Настя шкафран чей чашкисем кăларса сĕтел çине лартать. Унтан çавăнтанах, аялти хутĕнчен, Павăл эрех кĕленчисем кăларса лартать.

П а в ă л. Ларăр-ха, ваше благороди, сĕтел хушшине.

Настя. Ах, ати, салтак мар-çке эсир, ун пек чӗнме?

Павăл. Юрать пире, мӗнле чӗнсен те.

Настя. Аван мар ун пек. Ан айăплăр ӗнтӗ эсир, Ипполит Васильевич.

Поляков (*сӗтел хушшине ларса*). Ничево, ничево.

Настя. Мӗн чуль вӗрентмен пуль ăна Сережа...

Павăл. Вăл шухăш мар пирӗн пуçра.

Поляков. Среда çапла-çке кунта. Ялта пурăнсан, мӗн вӗреннине те манса кайăн.

Павăл (*черккисене эрех тултарса*). Вот ку тӗрӗс сăмах. Пире кунта вӗренни мар, вăй та карланкă анчах кирлӗ. Ну, тавайăрха, йăвантарар черккесене. Тытăр, ваше благороди. (*Пурте черккисене çӗклеççӗ*).

Поляков. Ну, ырă хуçа сывлăхшӗн пултăр!

Павăл. Тав сире!

Настя. Паттăр упăшкасемшӗн! (*Ӗçеççӗ*).

Поляков. Чаплă эрех! (*Нихçан курман пек çиме пуçлать*).

Павăл. Авалхи запас. Пирӗн Çерушăн юратнă эреххи. (*Татах черккисене тултарать те татах ӗçеççӗ. Настя кăшт çеç сыпса лартать. Вăл тăрса хăй пӳлӗмӗнчен гитара илсе тухать те, офицер çумне ларса вылляма пуçлать*).

Настя (*гитара çинче выляса юрлать*).

Очи черные, очи ясные,
Очи милые и прекрасные...

Тарелкăпа йÿçнĕ панулми йăтса Мараç кĕрет.

Мараç. Кин, кайса пăхсам кайри пÿрте. Ачу темшĕн пит хытă макăрать.

Настя (*гитарне пăтаран çакса, кÿренсе*). Татах выртса çывăрчĕ пуль ĕнтĕ, çав шуйттан хĕрачи. Пĕр йĕркеллĕ нянька тупса параймастăр. (*Тухса каять. Офицер ун хыççăн пăхса юлать*).

Мараç (*офицере*). Çийĕр-ха эсир, çийĕр. Павăл, салтаксене чĕнмерĕн-им чей ĕçме?

Павăл. А эп...

Поляков. Кайран та ĕлкĕрĕç-ха. Пушă мар-ха вĕсем.

Павăл. Салтакăн чăтас пулать.

Мараç. Юрĕ, юрĕ. Хăвăрăнне хăвăр пĕлетĕр. Çийĕр-ха, çийĕр. (*Тухса каять*).

Павăл (*черккисене тултарать*). Тепрерĕшне ярар-ха, Ипполит Васильевич.

Поляков (*ÿсĕрĕлме пуçлани палăрать*). Çитет пуль, Павел Егорыч. Час каяс пулать пирĕн.

Павăл. Кунпах аптăрамăр-ха. (*Ĕçеççĕ*). Ăçталла çул тытатăр-ха эсир?

Поляков. Кунтан инçех мар юханшыв пулмалла.

Павăл. Пур. Аслă çул ун урлах каçса каять.

Поляков. Кĕпер мĕнле унта?

Павăл. Чиперех-ха. Паян анчах ун урлă каçса килтĕм.

Поляков. Чиперех тăрать пулсан, сыхлас пулать ăна пирĕн, хамăрăннисем каçса кайиччен.

Павăл. Ниуштă кунтах çитĕç-ши хĕрлисем?

Поляков. Иртсе те кайĕç, пожалуй. Хытă хĕсеççĕ сволочьсем!

Павăл (*сăхсăхса илет*). Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм! Хăтар пире усалтан! Вĕсем килсен пĕтĕм пурлăха çаратса пĕтерĕç.

Мараç сухрашса кĕрет.

Мараç. Ах, шуйттан хĕрачи! Ăçта мура кайса кĕчĕ вăл!

Павăл. Мĕн янрашса çӳретĕн?

Мараç. Сарпи таçта кайса çухалчĕ...

Поляков (*шикленсе*). Кам вăл Сарпи?

Павăл. Ача пăхма илнĕччĕ те...

Мараç. Ах, пӳтсĕрскер!..

Поляков. Ашшĕ-амăшĕсем кам ун?

Павăл. Тăлăх хĕрача вăл.

Поляков. Что-то не ладно. Эпир килни çинчен систерме кайман-ши вăл?

Мараç. Пулĕ те, шанма çук...

Павăл (*арăмĕ çине çиленсе пăхать*). Ан сӳпĕлтет, ухмах. (*Офицере*). Ваше благор... Ипполит Васильевич, ан пăлханăр, тархас-

шăн. Ниçта та мар, аслашшĕ патне кайнă вăл. Салтаксенчен хăрарĕ пулмалла...

Поляков. Кам ун аслашшĕ?

Павăл. Кĕтӳç старик. Хăрушă çын мар вăл.

Поляков. Ну, астăвăр... апла-капла пулсан...

Мараç. Ах, çĕрçăтасшĕ пуçна! Чим-ха эп ăна! Ак, ыран ирех çӳçрен сĕтĕрсе килетĕп!..

Павăл (*арăмне, хуллен*). Ан палкаса тăр. Тухса кай кунтан!

Мараç. Ах, турăçăм. Çăвара кăшт уçма та çук... (*Тухса каять*).

Поляков. Фу, чорт! Кругом неприятности. Никам çине те шанма çук халь...

Павăл. Çапли çапла пулĕ те-ха, анчах...

Сашков (*тултан алăка шаккаса*). Ваше благороди! Кĕме юрать-и?

Поляков. Кĕр!

Сашков кĕрсе честь парать.

Сашков. Ваше благороди!..

Поляков. Ну?!.

Сашков. Пĕр ачана тытса килтĕмĕр, ваше благороди.

Павăл. Ав хайхи...

Поляков Ăçтан? Мĕнле ачана?

Сашков. Петровпа урам вĕçне çитрĕмĕр те, итлесе тăратпăр. Сасартăк пĕр юланут сиктерсе тухрĕ. Пăхатпăр — иккĕн утланса

ларнă.—Стой!—тесе кăшкăртăм та, чарăнмарĕç. Тытрăм та петĕм. Лаши хăраса сикрĕ те, пĕри ўксе юлчĕ. Укнĕ-ўкменех лешин хыççăн чупса: „Сартуан!" тесе элле тем кăшкăрчĕ. Лешин ятне тата тем „пăкет" тенине çеç ăнлантăм.

Поляков. Илсе кĕр ăна кунта.

Сашков. Слушаюсь, ваше благороди! (*Тухса кайрĕ*).

Павăл. Вăт тамаша... (*Кайма тăчĕ*).

Поляков. Тăхта, Павел Егорыч.

Павăл. Чăрмантарап пуль терĕм.

Сашков Алима илсе кĕрет.

Сашков. Акă, ваше благороди. Ку шăхличе унран тытса илтĕм. (*Алим курайне парать*).

Поляков. Так, так. Шăхлич калама ăста эппин эсĕ? (*Алим чĕнмест. Офицер денщикне тухса кайма кăтартать*).

Сашков. Слушаюсь, ваше благороди! (*Тухать*).

Поляков (*Алима*). Чĕлхесĕр-им эсĕ?

Алим. Çук.

Поляков. А-а... Эп сана чĕлхесĕр тесе. Ну, кунтарах кил эппин, калаçăпăр. (*Алим ун патне пырса тăрать*). Нукка, ме-ха, выляса кăтарт пире. (*Алима курайне парать*).

Алим. Ташă çемми калас-и?

Поляков. „Интернационал" кала.

Алим. Мӗнле кӗвӗ вӑл „Интернационал"?

Поляков (*сӑнаса пӑхать*). Пӗлместӗн-им?

Алим. Çук.

Поляков. Мӗнле-ха эс, хамӑрӑн чи юратнӑ юрра пӗлместӗн? (*Юрласа кӑтартать*).

Вставай, проклятьем заклейменный...

Ну, астуса илтӗн-и?

Алим. Çук. Пӗлместӗп. „Чижик-чижик" каласа кӑтартам-и?

Поляков (*Алим çине иккӗленсе пӑхать*). Ну, ну, кала-ха эппин.

Алим (*курайпа „Чижик-чижик" вылять*).

Поляков. Çитӗ. Лайӑх калатӑн. Маттур.

Алим. Ташлатӑр-и, ташӑ çемми калап?

Поляков. (*Алима хирӗç ответ памасӑр, Павӑлтан ыйтать*). Мӗнле çын ачи вӑл?

Павӑл. Пӗлместӗп. Пирӗн ялсем мар вӑл.

Поляков. Ах, так. (*Алима*). Мӗн ятлӑ пулатӑн-ха çак эс?

Алим. Алим ятлӑ.

Поляков Так, так, Алим. Тутар-им эсӗ?

Алим. Çук, Пушкӑрт эпӗ.

Поляков. Ăçтан чӑвашла калаçма вӗреннӗ эсӗ?

Алим. Чӑваш ялӗнче пурӑннӑ эпир.

Павӑл. Хӑш ялта?

Алим. Саркассинче.

Павӑл. Хамидулла ачи мар пуль вӗт эсӗ?

Алим (*тытӑнкӑллӑн*). И-я.

Поляков. Мĕн ĕçлет сан аçу?

Алим. Вилнĕ вăл.

Поляков. Ăçта?

Алим. Вăрçăра.

Павăл. Суять, ваше благороди. Персе вĕлернĕ ăна. Коммунист пулнă вăл.

Поляков (*тимлесе*). А-м, понятно. (*Алима*). Тăлăха тăрса юлнă эппин эсĕ.

Алим. И-я.

Поляков. Каласа пар-ха, Алим. Ăçта кайма тухнăччĕ эсир юланутпа?

Алим. Выртмана.

Поляков. Ма пит каçа юлтăр?

Алим. Сартуан пиччĕшĕ лава кайнăччĕ те, çĕрле тин таврăнчĕ.

Поляков. Так, так. А мĕншĕн-ха салтаксем „стой!" тесе кăшкăрсан чарăнмарăр?

Алим. Эпир вĕсене вăрăсем пуль тесе. Лашана тытса илесрен хăрарăмăр.

Павăл. Калаçма пĕлет вĕт, шельма.

Поляков. А, кала-ха, Алим, мĕнле пакет пирки кăшкăртăн эс юлташна?

Алим. Мĕнле пакет? Пĕлместĕп. Эп нимле пакет çинчен те кăшкăрман.

Поляков. Ну, ну! суймасăр калаç! Лаша çинчен ўксе юлсан мĕн тесе кăшкăртăн?

Алим (*астуса илнĕ пек*). Э-э, ав мĕн çинчен иккен эсир.

Поляков. Астуса илтĕн-им? Ну, ну, каласа пар.

Алим. Лаша çурăмĕ ыраттарасран, ая ман пиншака сарнăччĕ эпир. Çавăнпа та эп: „Сартуан, пиншака ан çухат. Асту, пэкĕ шалти кĕсъере“, тесе кăшкăртăм. А салтак „пэкĕ“ тенине „пакет“ тенĕ пек илтнĕ.

Поляков (*Павăл çине пăхса*). Что за чертовщина?

Алим. Пэкки пит шепчĕ, çухатмин юрĕччĕ.

Павăл. Суять пулмалла, ваше благороди. Леш Сартуанĕ те путлĕ çын ачи мар.

Поляков. Ну, Алим, çитет шӳт тума. Кала тĕрĕссипе...

Алим. Эп йăлтах тĕрĕссине каларăм-çке?

Поляков (*сасартăк сĕтел çине çапса*). Суятăн, йыт çури! (*Алим чĕнмест*).

Павăл. Кăшт хăлхинчен туртас пулать, ваше благороди.

Поляков (*siксе тăрса Алим патне пырать*). Калатăн-и, çук-и?

Алим (*хăюллăн*). Мĕн калас тата ман сана?

Поляков. Ах ты сволочь! (*Алима çапса ярать. Çав вăхăтра уçă чӳрече витĕр Семен пуçĕ курăнса каять*). Калаттарăп эпĕ сана! (*Алима çухаран ярса тытать, çав вăхăтрах тулта хытă шавлама пуçлаççĕ*).

Яккусасси. Ярăр мана офицер патне! Ярăр! Не имеш право мана арестлеме!

Поляков (*Алима тĕксе ячĕ. Павăла*). Кам çухăрать тата унта?

Павăл. Яков Харлампеев пулас.

Поляков. Кам вăл?

Павăл. Пирĕн ял писсăрĕ.

Якку (*алăк хыçĕнчех, тĕпĕртетсе кăшкăрать*). Нахал! Ма çапатăн мана! Ваше благороди! Господин офицер!..

Офицерпа Павăл алăк патнелле пыраççĕ. Çав вăхăтра уçă чӳречерен Çемен курăнать.

Çемен (*хуллен*). Алим!.. (*Алим Çемене курчĕ. Леш ăна аллипе чӳречерен сикме кăтартать. Алим çиçĕм пек хăвăрт пырса чӳречерен Çемен алли çине сикет те, иккĕшĕ те çухалаççĕ.*)

Алăк уçăлать. Ун умĕнче Яккупа Сашков кĕрмешеççĕ. Якку алăк урлă тăсăлса ӳкет.

Якку Нахал!.. (*Упаленсе тăрать*).

Поляков. Что за безобразие!.. Встать смирно!

Сашков (*каçăрăлса тăрать*). Ваше благороди, Иванов тытса килчĕ ăна, урамран.

Поляков. Ухмахсем! Кăларса ярăр ăна...

Якку (*тӳрĕ тăма тăрăшса*). Господин офицер, ваше благороди... Эп... эп писарь!

Поляков. Марш! (*Хăвăрт çаврăнать те сĕтел патнелле кайма тăрать. Çав вăхăтра тин пӳлĕмре Алим çуккине асăрхаса илет; чӳрече уççине курать.*) Тухса тарнă, негодяй! (*Яккăва тĕккелесе кăларакан Сашкова кăшкăрса.*) Сашков, догнать мальчишку!

Сашков (*уҫӑ алӑк умӗнче*). Слушаюсь, ваше благородие! (*Хӑвӑрт тухса каять*).

Павӑл. Вӑт шуйттан ачи.

Поляков (*алӑкран тухса кайма ӗлкӗреймен Якку патне револьверпе юнаса пырать*). Персе пӑрахас пулать сана! Подлец ты, этакий!

Якку (*офицер ури умне ӳксе, йӗрсе ярать.*) А-ха-ха-ха-а! Тархасшӑн ан вӗлерӗр, ваше благороди!..

ЧАРШАВ.

## Иккӗмӗш картина

Сцена ҫавах, ҫутӑлнӑ. Чӳречерен хӗвел ҫути кӗрет. Чаршав уҫӑлнӑ маях, сцена хыҫӗнче, таҫта аякра пӑшал пени, пулемет сасси илтӗнет. Пӳлӗмре никам та ҫук. Сулахайри алӑк ҫурма уҫӑ. Сӗтел ҫине пуҫтарман. Кӑшт тӑрсан сылтӑмран алӑка шакаҫҫӗ.

Сашков (*алӑка шаккаса*). Ваше благороди! Ваше благороди! Тӑрӑр часрах! Пӗтрӗмӗр, ваше благороди! (*Хытӑ шаккать*).

Сулахайри пӳлӗмрен тумлана-тумлана офицер тухать.

Поляков (*ҫухине тӳммелесе*). Негодяй! Сволочь! Халиччен ҫывӑрнӑ! Тӑратман мана... (*Ятлаҫа-ятлаҫа алӑкне уҫать*).

Сашков кӗрсе каҫӑрӑлса тӑрать.

Сашков. Ваше благорр...

Поляков. Вот тебе! (*Сашкова енчен-енчен ҫапа-ҫапа ярать*). Сукин ты сын! Подлец такой!..

Сашков. Виноват, ваше благороди!

Поляков. Татах ҫыврса юлнӑ! Господи, господи! Пӗтерет вӑл мана... (*Ҫӗтел ҫинчен эрех тултарса ӗҫет*).

Сашков. Виноват, ваше благороди. Хам та сисмен. Ларнӑ ҫӗртех ҫывӑрса кайнӑ.

Тулта пӑшал сассисем.

Поляков. Кам перет?

Сашков. Хӗрлисем, ваше благороди.

Поляков. Мӗн?!

Настя ухмахланнӑ пек кӑшкӑрса кӗрет.

Настя. Ах, ах! Хӗрлисем! Пытанӑр часрах, Ипполит Васильевич. (*Хӑй пӳлӗмне чупса кӗрсе каять*).

Поляков. Нимӗн те ӑнланмастӑп. (*Сашкова*). Мӗн юпа пек хытса тӑратӑн! Йӗнерле лашана!

Сашков. Лашасем хатӗр, ваше благороди. Анчах... тарма май ҫук...

Сулахай пӳлӗмре кантӑк ҫӗмӗрӗлнӗ сасӑ. Унтах Настя ҫухӑрса тухать.

Настя. Ах, ах, хӑтарӑр! Хӑтарӑр!..

Пурте тӗпӗртетсе тухса каяҫҫӗ. Тулта пӑшал сассисем.

Алим (*сцена хыҫӗнче*). Асту, Иван пичче!..

Иван сасси. Ҫук! Тараймӑр, ваше благороди! (*Пӑшал ҫассисем*).

Алим. Урра!.. Ай, вай-вай!.. Сартуан!.. Пер, Павӑлне!..

Сартуан сасси. Стой, кашкăр! Ăçта таратăн!

Пăшал сасси.

Алим. Ах!.. Иван пичче! Сартуана вĕлерчĕç!

Иван. Сволочи!.. (*Пăшал сасси*).

Павăлпа Çемен кĕреççĕ. Павăл пăшал тытнă. Вăл кĕнĕ-кĕменех алăкне питĕрсе хучĕ, хăй хытă хăранипа чĕтрет.

Павăл (*Çемене хулĕнчен çакăнса*). Çемен, Çемен! Эп сана мĕн ачаран пăхса ӳстертĕм... Çын турăм. Хăтар мана, хăтар, Çемен. Турă пул тархасшăн...

Çемен. Пар пăшална! Чӳречерен сада сикте, тар çырма тăрăх. Эп никама та кĕртместĕп (*Павăл пăшалне парасшăн мар*). Часрах! (*Пăшалне пачĕ*).

Павăл. Ну, асту, Çемен... Вилĕмрен хăтăлса юлсан, ĕмĕр манмăп... Ылттăн айне тăвăп. Асту, хыçран хăвалама ирĕк ан пар вĕсене. (*Чӳречине уçса садалла сикме тăрать*).

Çемен. Çул телейлĕ пултăр! (*Павăла хыçалтан тĕллесе перет. Леш тул еннелле тирĕнсе анать*). Ак сана, вунă çул хушши ман юна ĕçсе пурăннăшăн! Манне çеç мар, нумай çын юнне ĕçрĕн эсĕ, хура çĕлен. (*Чӳрече витĕр пырса пăхать*). Шалчу тулчĕ-

им, путсӗрскер? Тьфу! (*Ҫавӑрӑнса алӑк патне пычӗ, алӑка уҫрӗ*).

Ҫемене хирӗҫ Иванпа Алим кӗреҫҫӗ. Иван сухалсӑр, красноармеец тумӗпе. Вӑл аманса тӑнсӑрланнӑ. Сартуана йӑтнӑ.

Алим. Ҫемен!..

Иван (*Сартуана сак ҫине вырттарса*). Эх, утаман, утаман! Ҫапӑҫу пуҫламӗшӗнчех аманма юрать-и вара. (*Пуҫне бинтпа ҫыхать*).

Сартуан. Ой!..

Алим (*хавассӑн*). Вилмен!

Иван. Чаплӑ ӗҫ тунӑ хыҫҫӑн вилме юрать-и вара, Алим? Халь ӗнтӗ пурӑнас та пурӑнас пулать сирӗн! Маттур ачасем эсир! Пакета вӑхӑтра ҫитерне. Кӗпер шӑпах шуррисем каҫма пуҫласан кӑна сывлӑша сирпӗнсе кайрӗ. Курӑка ҫавапа ҫулнӑ пек ҫултӑмӑр шуррисене.

Сартуан. Ой!..

Иван. Ничево, утаман. Тӳсес пулать. Пӗлмен эсӗ, пуллине алӑпа тытмаллачӗ сан.

Ҫемен. Павӑла тӗллерӗ те ҫав вӑл, анчах леш хӑй маларах чиртсе ӗлкӗрчӗ.

Алим. Ӑҫта тарчӗ вӑл, шампа хырӑм?

Ҫемен. Ав, чӳречерен пырса пӑх-ха.

Алим (*чӳречерен кармашса пӑхать*). Ай, вай-вай. Сысна пек выртать. Хаҫ!

Ҫемен. Тухса, лапас айнелле сӗтӗрсе кӗрес, путсӗре; офицерӗпе юнашар выртчӗр. (*Тухса каять*).

Иван. Ну Алим, Сартуан панчен ниçта та ан тух эп киличчен. Кайса пĕлем-ха эп, ăçта çӳрет пирĕн тухтăр. (*Кайма тăрать*).

Алим. Иван пичче!..

Иван. Мĕн, Алим?

Алим. Чапай килмест-им ку яла? Питĕ курас килет ман ăна.

Иван. Курăн, Алим, обязательнă курăн. Вăл кунта килмесен те, эп сана ун патне илсе кайăп.—Акă вăл, паттăр Алим!—тейĕп. Ну, асту Сартуана. (*Иван тухса кайрĕ*).

Алим (*вăтаннă пек пулса*). Эп паттăр мар... (*Сартуан çине ăшшăн пăхса*). Акă вăл паттăр, лăпкăн выртать. (*Сартуан çумне ларчĕ*).

Сартуан (*куçне уçса*). Алим...

Алим (*ун пичĕ патне тайăлса*). Мĕн, Сартуан?

Сартуан. Кам çĕнтерчĕ?

Алим. Эпир çĕнтертĕмĕр, Сартуан!

Сартуан (*тăрса ларчĕ*). Алим, Павăл тарчĕ-им?

Алим. Çук. Çемен персе пăрахнă ăна.

Сартуан (*хавассăн сывласа ячĕ*). Аван апла пулсан... Тем пулнă ман пăшала: петĕм-петĕм, такки пемерĕ.

Уçă чӳречерен урамри хаваслă сасăсем илтĕнме пуçлаççĕ. Сартуан тăрать. Алим ăна чӳрече умне çавăтса пырать. (Сулахайри чӳрече урам еннелле).

Сартуан. Мĕн кăшкăраççĕ унта, Алим?

Алим (*чӳречерен кармашса пăхать*). Пăхха, Сартуан, пĕтĕм ял халăхĕ урама тухнă.

Урамра урра! кăшкăрни илтĕнет.

Сартуан. Илтетни, Алим, урра кăшкăраççĕ?

Алим. Ай, вай-вай! Сартуан! Хĕрлисем килеççĕ!

Сартуан (*чӳречерен пăхса*). Утлă çар!

Урамри сасăсем. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар! Урра!!! Сывă пултăр Совет влаçĕ! Урра!!! Сывă пултăр Чапаев! Урра!

Алим. Илтетни, Сартуан, Чапай теççĕ. Ав, Сарписем те килеççĕ. (*Кăшкăрать*). Сарпи! Кил-ха кунта!

Сартуан (*чӳречерен тухса ӳкес пек пăхса*). Алим, хăшĕ Чапай?

Чӳрече умне Сарпи килсе тăрать.

Алим. Сарпи, хăшĕ Чапай?

Сарпи. Курмастăр-им? Ав, вăтаçĕртен, пуринчен малта пырать.

Сартуан. Шурă лашалли-и?

Сарпи. Ĕччĕ. (*Урамра лаша такан сассисем илтĕнеççĕ*).

Алим. Çавă. Çавă Чапай! Ав епле вăл, богатырь пек ларса пырать!

Сартуан. Лаши епле пуçне ухать!

Алим (*хытă кăшкăрса*). Сывă пултăр паттăр Чапай! Урра!

Пӳртре те, тулта та урра кăшкăрнă сасă кĕрлесе тăрать. Ачасем урамалла алă сĕлтеççĕ. Алим чӳрече умне тăрса курайĕпе „Интернационал" выляса ярать. Часах курай сасси çумне духовой оркестр сасси хуташăнать. Урам тулли лаша такан сассисем, хавассăн саламланă сасăсем кĕрлесе тăнă май, ачасем чӳрече умĕнче алă сĕлтсе тăраççĕ. Сасă майĕпен лăпланса пырать, чаршав хуллен хупăнать.

В Ĕ Ç Ĕ.

Отв. редакт. *Кузьма Чулгась*

НТ3522
Тираж 3.000 экз.
Формат бум. $60 \times 92^1/_{32}$
Подписано к печати 17-VI 1941 г.
Объем 2 печ. л.
В 1 п. л. 41984 зн.
Зак. № 1551

Типография № 2 Управления
Издательств и Полиграфии при
СНК ЧАССР. г. Алатырь.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары

Цена 95 коп.

А. КАЛГАН

# А Л И М

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941